**Василий Давыдов-Анатри**

# Вутăш

**Легенда**



Ĕлĕк-авал кăнтăрта,
Чуллă-сăртлă вырăнта,
Пин-пин йывăç хушшинче,
Хура тинĕс хĕрринче
Ватă кунĕ çитиччен
Пурăннă, тет, пĕр хресчен.
Апи-ака ятлăскер,
Ăшă, ырă чунлăскер.
Апи-ака ĕçĕпе,
Хăйĕн çивчĕ ăсĕпе
Юлман, теççĕ, çынсенчен.
Ялйышсенчен, туссенчен,
Ир пуçласа сĕм каçчен,
Çурла уйăх тухиччен,
Вăл кĕмен хăй пахчинчен,
Иçĕм çырли садĕнчен.
Апи-ака чунĕпе,
Таса ырă кăмăлпе
Савнă çутă тĕнчене,
Савнă кăнтăр çĕршывне.
Вăл юратнă пуринчен
Пĕтĕм чунтан-чĕререн
Хăй ÿстернĕ пикене,
Чипер хÿхĕм Арсине.
Арси хăйĕн сăнĕпе,
Яштак хăва пĕвĕпе,
Икĕ çăлтăр куçĕпе,
Икĕ çырла тутипе
Ăмсантарнă çынсене,
Мĕнпур ватти-вĕттине.
Савнăç кÿнĕ ашшĕне,
Ырлăх кÿнĕ амăшне.
Çырла сăнлă Арсине,
Ĕçчен, сăпай пикене
Хисепленĕ каччăсем,
Çÿллĕ сăрт-ту ачисем.
Арси куллен ирхине
Аннă тинĕс хĕррине.
Вăл шыв ăснă çут çăлтан,
Сиксе юхан валакран.
Арси ÿснĕ вăхăтра,
Те ырлăха, те хурра,
Кунта килнĕ пĕр купса.
Тавар пухса е сутса
Вăл çÿренĕ кăнтăрта,
Ăшă, сиплĕ вырăнта.
Али-папа — ячĕпе,
Хура çăхан — ĕçĕпе,
Пит чеескер — куçĕпе,
Пит хытăскер — чунĕпе.
Çак çын килнĕ Турцирен
Султан-патша патĕнчен.
Ăна кăнтăр çыннисем,
Сунарçăсем, пулăçсем,
Калама çук юратман,
Савса пĕрре пуç тайман.
Тĕрлĕ çĕртен, ялсенчен,
Хыпар килнĕ ун çинчен;
Али-папа хĕрсене,
Çунат сарнă чунсене,
Хăй куçĕнчен вĕçертмен,
Пĕр пĕрчĕ те хĕрхенмен.
Вăл вăрланă вĕсене,
Кайса сутнă Турцине...
Арси ансан çăл патне
Али-папа ун çине
Пăхса тăнă чылайччен
Чул кулисем хушшинчен.
Вăл пикене вăрлама,
Ăна сутса ыр курма
Кунĕн-çĕрĕн шухăшлать,
Кунĕн-çĕрĕн мел шырать.
Арси çакна тĕшмĕртет,
Ăна курсан — шикленет.
Анчах çутă тĕнчере
Туять хăйне ирĕкре.
Арси ÿссе çитĕнсен,
Килеç чылай ялсенчен
Ятарласа хĕр пăхма,
Сăмах татма, çураçма.
Ашшĕ-амăш хăй хĕрне,
Çырла сăнлă Арсине,
Хал çитермен уйăрма,
Хал çитермен çураçма.
Арсин пулнă юратни,
Маттур каччă, чун савни.
Уншăн çуннă чĕререн
Çак çамрăк чун кунсерен.
Шунă вăхăт ерипен,
Савнă тусĕ патĕнчен
Арси патне калаçма,
Хĕр çавăрма, çураçма
Килнĕ евчĕ пĕр ирпе
Çĕр çул ларнă эрехпе.
Арси ашшĕ-амăшне
Йывăр пулнă ун чухне,
Анчах чунĕ савнинчен,
Хĕрне пÿрнĕ каччинчен,
Шухăш тытман уйăрма,—



Сăмах татнă хĕр пама.
Çак çĕн хыпар саланать
Хăвăрт пĕтĕм таврана.
Мĕнпур сăрт-ту çыннисем,
Мĕнпур каччи-хĕрĕсем
Арси туйне кĕтеççĕ,
Хĕре телей пиллеççĕ.
Кашни парне хатĕрлет,
Туй илемлĕ пултăр, тет.
Чăн та сăрт-ту çыннисем,
Хĕр çуммисем, тантăшсем,
Туя лартаç Арсине,
Шеп те пуçлаç ун туйне.
Ту хушшинче туй кĕрлет,
Сăвă-юрă илтĕнет...
Хĕвел ансан ту хыçне
Пин тĕрĕллĕ кăкшăмпа
Хăй çӳренĕ сукмакпа
Арси аннă çăл патне,
Йăпатмашкăн хăй чунне
Ларнă тинĕс хĕррине.
Вăл çакăнта чылайччен
Тинĕс çинчен куç илмен.
Юлашки хут çакăнтан,
Сиксе юхан валакран
Чипер Арси шыв ăсать,
Сар кăкшăмне тултарать.
Ай-Петри * те ун чухне
Çырла сăнлă хĕр çине
Пăхнă савса, юратса,
Телейлĕ çул, ыр сунса.
Анчах Арси астуман:
Ăна куçран çухатман
Хайхи вăрă-хурахсем,
Али-папа тарçисем.
Çĕр çумĕпе йăпшăнса,
Çĕлен евĕр шăвăнса
Али-папа çăл патне
Анать, пăхать хĕр çине.
Тăсать усал аллине,
Ярса тытать Арсине.
Арси ярать кăшкăрса,
Пĕтĕм çĕре хускатса.
Хĕрĕн чунне хĕрхенсе,
Ун кăмăлне шеллесе
Тинĕс хуллен хумханать,
Çыран хĕрне ыткăнать.
Али-папа васкаса
Урăм-сурăм савăнса,
Чипер пике Арсине
Хурать хăйĕн киммине.
Арси хурлăн сас парать,
Хăйне çăлма йыхăрать...
Часах тинĕс хĕррине,
Шăнкăр-шăнкăр çăл патне,
Туйри çынсем анаççĕ,
Пурте ăнран каяççĕ:
Лекнĕ хĕр çак каçхине
Вăрă-хурах аллине.
Куççуль тăкса, макăрса,
Чун-чĕререн кулянса
Çынсем утнă килелле
Ту хушшипе çӳлелле.
Ашшĕ çуннă çулăмпа,
Амăш ваннă хуйхăпа.
Савнă тусĕ ĕмĕрне
Тек курас çук Арсине.
Хайхи вара çав кунтан
Шыв юхман, тет, валакран.

Пăртак кăна, куççулле,
Тумлам ӳкнĕ çĕрелле.
Али-папа Турцире
Чипер, хӳхĕм çак хĕре
Илсе тухнă пасара
Çынсем шавлă вăхăтра.
Пурте пăхнă хĕр çине,
Пурте пăхнă Арсине.
Али-папа мухтанса,
Шур сухалне каçăртса
Ларнă Арси çумĕнче,
Ларнă çынсем умĕнче.
Ват чун чипер Арсине,
Ăшă кăнтăр пикине,
Сутса ярать султана —
Хаяр, усал тăшмана.
Арси çунать çулăмпа,
Арси типет хуйхăпа.
Çич ют султан аллинчен,
Ун ылханлă йăвинчен,
Çăлăнмашкăн мел шырать,
Тухса тарма шухăшлать.
Вăхăт шунă пит хуллен,
Арси йĕмен кун иртмен.
Çĕрĕн-кунĕн хуйхăрса,
Сăнран пынă шуралса.
Ним тума çук, макăрса,—
Панă ывăл çуратса.
Ача телей темелле,
Чуна савнăç кӳмелле,
Анчах Арси хуйхине,
Унăн чунĕ çуннине
Чаран хăват тупăнман,
Вăл пĕрре те куç хупман.



Хĕре тăшман вăрлани,
Чун савнинчен уйăрни
Шăп çулталăк тултарсан,
Хĕвел анса пытансан,
Султан башни тăрринчен,
Тарçи-тĕрçи куриччен,
Арси сикет Босфора *,
Кунĕ пĕтет çак шывра.
Çав каçхинех ачипе,
Хăйĕн пĕчĕк чунĕпе,
Вутăш пулса, хал пухса,
Йăлтăр-йăлтăр çуталса,
Тухать тăван çĕр енне,
Тухать тинĕс хĕррине.
Арси пăхать чылайччен,
Пĕтĕм чунĕ каниччен
Çӳллĕ тусем еннелле,



Кипариссем çинелле.
Арси пырать çăл патне,
Курать вăл йăлт типнине.
Хай çăл Арси чĕннипе,
Ун сăваплă ячĕпе
Юхма пуçлать çĕнĕрен
Кăвак чул ту хушшинчен.
Çутă çăлăн шывĕпе,
Хăй çуралнă кĕтеспе,
Чĕвĕл-чĕвĕл чĕкеçпе,
Кипариспа, персикпе
Арси пуплет, сăмахлать,
Телей сунса пуç таять.
Вара хуллен-майĕпен,
Хăйне çынсем куриччен,
Анать тинĕс хĕррине,
Кĕрет хумсем хушшине.
Арси куçран çухалсан,
Шыв тек юхман валакран.
Арси чунне хĕрхенсе,
Ун кун-çулне шеллесе
Çăл шыв тăнă сăрхăнса,
Куççуль евĕр тумласа.
Арси тухнă тинĕсрен
Çулталăкра пĕр хутчен,
Шăпах тăшман аллине
Чунĕ лекнĕ каçхине.
Арси хăйĕн ачипе,
Пĕчĕк ырă чунĕпе,
Пынă савнă çăл патне,
Тăнă валак айккине.
Вара каллех ун чухне,
Арси-вутăш телейне,
Хайхи мĕскĕн тип çăлран,
Хайхи мĕскĕн валакран
Юхнă çут шыв юрласа,
Шăнкăр-шăнкăр сас парса.



* Ай-Петри — Крымри çӳллĕ ту.

* Босфор — Хура тинĕс пырĕ.